# ЭПИР ПУР ÇĔРТЕ ТЕ МАТТУР....

**Нарăсăн 3-мĕшĕнче Муркаш районĕнче хĕллехи спорт сезонне йĕлтĕрçĕсем уçрĕç. Çанталăк шартлама тăрать пулин те ăмăртăва нумай çын пуçтарăнчĕ.**



Эпир йĕлтĕрçĕсем хушшинче вĕрентекенсене, ял поселени ĕçченĕсене, ял хуçалăхра тăрăшакансене те, администрацире вăй хуракансене те асăрхарăмăр. Тĕп шкулсенчен 1-мĕш вырăна Очăкасси шкулĕ, 2-мĕшне — Панкли шкулĕ, 3-мĕшне — Кашмаш шкулĕ тухрĕç. Вăтам шкулсенчен чи лайăх йĕлтĕрçĕсен ятне Ильинка шкулĕ çирĕплетрĕ, 2-мĕшне 3-мĕш вырăна Тивĕшпе Çатракасси шкулĕсем йышăнчĕç. Калайкасси шкулĕнчен вара унăн директорĕ Ирина Венедиктовна Осипова хутшăнчĕ. Вăл VIP ăмăртура 2-мĕш вырăна тухрĕ. Кунта тĕлĕнмелли нимĕн те çук. Ирина Венедиктовна сывă пурнăç йĕркине тытса пырать. Эпир ăна ыйтусем патăмăр.

**— «Лыжня России» ăмăрту пирки эсир мĕн шутлатăр ?**

— Питĕ кирлĕ мероприяти, мĕншĕн тесен унта нумай çын хутшăнать. Кам хăйĕн сывлăхне çирĕплетес тет, вăл хĕл ларсанах йĕлтĕр çине тăрать, уçă сывлăшра ытларах вăхăт ирттерме тăрăшать.

**— Çак ăмăртăва эсир мĕнле кăмăлпа хутшăнтăр?**

— Паллах, савăк кăмăлпа хутшăнтăм. Çанталăкĕ те питĕ хитре пулчĕ. Ирхине сивĕрех пулчĕ пулин те, ăмăрту пуçланнă вăхăталла сывлăш температури хăпарчĕ, хĕвел те хăйĕн çутипе савăнтарчĕ.

**— Эсир йĕлтĕрпе пушă вăхăтра чупма мĕншĕн юрататăр? «Сывă пурнăç» ăнлава уçса парăр-ха?**

— Пуриншĕн те паллă, йĕлтĕрпе чупни сывлăха çирĕплетет, кăмăл-туйăма çĕклет. «Сывă пурнăç» вăл, ман шутпа, çын хăйне халăх хушшинче тытма пĕлни, çынна кăмăллă пулни, сывлăха çирĕплетме тăрăшни тата ытти те.

**— Эсир çак спортпа хăçантанпа туслашнă?**

—Йĕлтĕр спортчĕпе шкулта вĕреннĕ чухнех туслашнă, тĕрлĕ ăмăртусене хутшăннă, çўллĕ тăвайккинчен те ярăнма хăраман.

**— Сирĕн çемье спортпа туслă-и?**

— Ман çемьере пурте спорта килĕштереççĕ, тĕрлĕ енлĕ аталанма тăрăшаççĕ.





**— Шкул ачисене мĕн суннă пулăттăр?**

— Шкул ачисене çирĕп сывлăх, вĕренўре çитĕнўсем сунатăп .

**СПОРТПА ТУСЛĂ ПУЛĂР !!!**

**Маргарита ЗАЙЦЕВА**
**8Б КЛАСС,**
**КАЛАЙКАССИ ШКУЛĔ**

# ШКУЛТА ОБЩЕСТВО ЭКСПЕРТИЗИН КУНĔ

**Калайкасси шкулĕнче нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче общество экспертиза кунĕ иртрĕ.**



Хăнасем акт залĕнче Калайкасси шкулĕ Раççей президенчĕн Грантне çĕнсе илме конкурса тăратма тивĕç е тивĕç маррине сўтсе яврĕç.

Пухăва Калайкасси шкул директорĕ И.В.Осипова уçрĕ. Ирина Венедиктовна шкул çитĕнĕвĕсемпе проблемисем çинчен каласа пачĕ. Унсăр пуçне малашлăха палăртнă плансемпе те паллаштарчĕ. Çитес çулсенче шкул ачисем сахалланса пыма пултарассине палăртрĕ, çавăнпа та вĕренекенсен шутне йышлатма, вĕренў процессĕн шайне хăпартма тата шкула малалла аталантарма Раççей президенчĕн Грантне çĕнсе илни пулăшĕ тесе ăнлантарчĕ вăл.

Калайкасси шкулĕн çитĕнĕвĕсем çине еплерех пăхни çинчен Вĕрентў министрĕн çумĕ М. Ю. Толстов каласа пачĕ.



А. М. Степанов шкулăн уроксем хыççăнхи пурнăçĕпе паллаштарчĕ, епле кружоксемпе секцисем, организацисемпе отрядсем ĕçĕ-хĕлне пĕтĕмлетрĕ.




Уйрăмах «Хыçалти парта» хаçат çинчен сăмах пычĕ. Пирĕн хаçат тухма пуçланнăранпах вулакансен кăмăлне кайни çав тери савăнтарать. Çакă вара, паллах, «Хыçалти партăна» кăларакансен тивĕçĕ.

«Хыçалти парта» республикăри ытти ачасем валли ятарлă хаçат-журналсемпе «вăйсемпе виçĕнсе» пăхма пултарать.

Обществăллă экспертиза кунĕ Калайкасси шкулĕ чăнахах Раççей президенчĕн Грандне çĕнсе илме, конкурса хутшăнма тивĕç пулни çинчен пĕлтерни пе вĕçленчĕ. Юлашкинчен Калайкасси шкулĕнчи «Чĕкеç» халăх юрăпа ташă ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ.

**Оля Кошкина, 9 класс**